27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 СЕНТЯБРЬ 5 ЫТЛАРИКУН 175(6670) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Фронтри пек ӗçлемелли вунӑкунлӑх

ВКП(б) Обкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, иккӗ тырпулсене пухса кӗртессипе вӗçлес тӗлӗшпе фронтри пек ӗçлемелли вунӑкунлӑх пуçланать. Çак вунӑкунлӑхра тӗштырпулсене, вӑрлӑхлӑх курӑксене, техникӑллӑ культурӑсене пухса çапас тата кӗрхи акӑ ӗçне мӗнпур вӑя мобилизацилесе пурнӑçламалла.

Вунӑкунлӑхра республикӑри нумай районсен пикенсе ӗçлемелле пулать. Вунӑкунлӑхра пирӗн республикӑри колхозсен 90.000 гектар ытла тырпул вырса пуçтармалла. Çак ӗçе мӗнпур вӑя мобилизацилесе, эпир ӑна пурнӑçлама пултаратпӑр, пурнӑçлама тивӗçлӗ те. Иртнӗ пилӗккунлӑхра пирӗн колхозсем 60.000 гектар ытла вырса пухрӗç. Чурачӑк районӗ иртнӗ пилӗккунлӑхра 16,2 процент, Шупашкар районӗ 15,3 процент, Вӑрмар районӗ 16,4 процент, Советски районӗ 19,6 процент ӳсӗм пачӗç. Анчах та Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав, Куславкка, Ишлей, Элӗк, Шӑхасан районӗсем иртнӗ пилӗккунлӑхра пачах начар ӗçлерӗç. Вӗсем 5 процентран пуçласа 10 процента çити кӑна ӳсӗм пачӗç. Шӑхасан районӗ иртнӗ пилӗккунлӑхра пурӗ те 1462 гектар кӑна вырса пуçтарнӑ. Çапла вӑл республикӑра 19-мӗш вырӑна ларчӗ. Паллах, кунта тырпулсене пухас ӗçе тӗрӗс организацилеменнипе, машинӑсемпе курлӗ усӑ курманнипе килет. Кӑна нумай тӗслӗхсемпе çирӗплетсе пама пулать. Хурамалти Ильич ячӗпе тӑракан тата Шӑхасанти «Красный Октябрь» колхозсене илер. Кунта колхозниксем ӗçе ирхине 8—9 сехетре тин тухаççӗ, хӗвел анниччен кӗреççӗ. Колхоза пӗрлешӳллӗ столовӑй çук. Машинӑсемпе, çавасемпе усӑ курмаççӗ. Колхозри ӗçе тӗрӗс организацилемен.

Фронтовой вунӑкунлӑхра уйрӑммӑн юлса пыракан Çӗмӗрле, Шӑмӑршӑ, Первомайски тата ытти районсен пикенерех ӗçлеме пулать. Кашни ӗçлеме пултаракан колхозникпе колхозницӑна ӗçе явӑçтармалла, машинӑсемпе туллин усӑ курмалла, çавасемпе çулмалла. Кашни кун мӗн тумаллине çирӗп план туса, вӑл плана пурнӑçласа пӗтӗм вӑй хурса, кӑнтӑрла та çӗрле те ӗçлемелле. Социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ямалла.

Тырра вырса пӗтерни тырра пухса кӗртмепе пӗтерӗнмест-ха. Тырра капана хывасси тата часрах çапасси ответлӑ ӗç пулса тӑрать. Халӗ çантӑлӑк уяр тӑрать. Çак вӑхӑтра туллин усӑ курмалла. Уйрӑм районсенче, лашасемпе государствӑна тырӑ памалли пӗлтерӗшне ӑнланмаççӗ. Паллах, лашасен государствӑна тырӑ пама çӗрте ӗçлемелле.

Анчах та Улатӑр, Элӗк, Йӗпреç, Куславкка, Первомайски, Шӑмӑршӑ районӗсен руководителӗсем тырӑ пухассипе çапассине тӗрӗс организацилемеççӗ. Вӗсем вӑрлӑхлӑх курӑксене пухса çапма тата колхозсенче 11.143 гектар вырса пухмалли курӑксене пухмаççӗ.

Вырса пухни, ... Улатӑр, Элӗк, Йӗпреç, Куславкка, Первомайски, Шӑмӑршӑ районӗсен руководителӗсем ... .

ВКП(б) Обкомӗ фронтри пек ӗçлемелли вунӑкунлӑхра республикӑри государствӑна тырӑ парас ӗçе хӑвӑртлатма хушать. Государствӑна тырӑ пама планне пурнӑçласси ... Кашни колхоз тырӑ памалли графике пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑçласа пымалла. Çав графике пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑçласа пымалла. Фронт тата çӗршыв умӗнчи хамӑрӑн маттанхи тивӗçе пурнӑçлассишӗн большевикла кӗрешмелле.

Фронтри пек ӗçлемелли вунӑкунлӑхра тырпулсене вырса пухас, кӗлтесене капана хывас, вӑрлӑхлӑх курӑксене пухса çапас тата тӗкӗлчес ӗçе ӑнӑçлӑн пурнӑçлама пирӗн пур условисем те çителӗклӗ. Район тата колхоз руководителӗсем ӗçе пӗлсе организацилени кӑна кирлӗ. Пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсен ӗçлес хастарлӑхӗ пысӑк. Хӗрлӗ Çарӑн фронтри çӗнтерӗвӗсем колхозниксемпе колхозницӑсене ӗçре пысӑк çитӗнӳсем тума хавхалантараççӗ. Пирӗн ӗçри çӗкленӗве пуçарса пыма пӗлмелле.

ВКП(б) Обкомӗ тырпулсене пухса кӗртессине вӗçлес тӗлӗшпе фронтри пек ӗçлемелли вунӑкунлӑх ирттересси çинчен йышӑннӑ постановленире, ВКП(б) райкомӗсене çак вунӑ кунлӑх çинчен кашни колхознике, комбайнера, тракториста, совхозсенчи кашни рабочие пӗлтерме хушрӗ. Тырпулсене пухса кӗртме тата кӗлте кӳрсе капана хывма мӗнпур вӑя мобилизацилесе, вӑл ӗçсене анлӑ фронтпа тата мӗнпур майсемпе туса пымаллине асӑрхаттарчӗ. Вунӑкунлӑх задачисене ӑнлантарса парас енӗпе колхозсенчи нумай йышлӑ агитаторсен ывӑнма пӗлмесӗр ӗçлемелле.

Украинӑри 2-мӗш фронт çарӗсемпе 3-мӗш фронт çарӗсем августӑн 20-мӗшӗпе 31-мӗшӗ хушшинче наступлени тунӑ вӑхӑтра тӑшман тӳснӗ çухатусем тата пирӗн çарсем тытса илнӗ трофейсем

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт çарӗсем, арми генералӗ МАЛИНОВСКИЙ командир пулса ертсе пынипе, августӑн 20-мӗшӗпе 31-мӗшӗ хушшинче наступлени тунӑ вӑхӑтра тӑшмана çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен çакӑн пек çухатусем тӳстернӗ:

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: самолетсем— 157, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем — 286, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем — 1.416, минометсем — 736, пулеметсем — 2.454, бронемашинӑсемпе транспортерсем—101, автомашинӑсем — 14.456, çар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем — 3.252. Тӑшманӑн, вилнисене кӑна шутласан та, 100.000 салтакпа офицер таран пӗтнӗ.

Çак вӑхӑт хушшинче УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт çарӗсем çакӑн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНӖ: самолетсем — 49, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем — 250, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—1.260, минометсем — 1.285, пулеметсем — 8.951, винтовкӑсемпе автоматсем—62.669, бронемашинӑсемпе транспортерсем — 112, автомашинӑсем — 12.103, çар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем—10.984, лашасем — 12.447, паровозсем — 188, чугун çул вагонӗсем—5.493, боеприпас, хӗçпӑшал, снаряжени тата апат-çимӗç склачӗсем — 367.

Тӑшманӑн 108.400 салтакӗпе офицерне, вӑл шутра 33.800 нимӗçе, ТЫТКӐНА ИЛНӖ. Çапла ӗнтӗ, УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт çарӗсем 12 кун хушши наступлени тунӑ вӑхӑтра тӑшман хӑйӗн çар техникин чи кирлӗ хатӗрӗсемпе çыннисене пӗтӗмпе çакӑн чухлӗ çухатнӑ: тыткӑна илнисемпе вилнисем — 208.400 çын, самолетсем — 208, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем — 536, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем — 2.676, минометсем — 2.021, пулеметсем—11.405, автомашинӑсем — 26.559.

* * *

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт çарӗсем, арми генералӗ ТОЛБУХИН командир пулса ертсе пынипе, августӑн 20-мӗшӗпе 31-мӗшӗ хушшинче наступлени тунӑ вӑхӑтра тӑшмана çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен çакӑн пек çухатусем тӳстернӗ:

ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ: самолетсем — 127, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем—250, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем — 1.100, минометсем — 540, пулеметсем — 2.300, автомашинӑсем — 10.192. Тӑшманӑн, пӗр вилнисене кӑна шутласан та, 110.000 салтакӗпе офицерӗ пӗтнӗ.

Çав вӑхӑт хушшинчех УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт çарӗсем çакӑн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНӖ: самолетсем — 18, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем — 170, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем — 1.800, минометсем — 700, пулеметсем — 5.400, винтовкӑсем — 68.000, автомашинӑсем — 9.889, çар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем — 9.201, лашасем — 20.000 яхӑн, паровозсем — 91, чугун çул вагонӗсем — 1.000 яхӑн, пӗчӗк çар карапӗсем — 23, суту-илӳ суднисем — 29, буксир парохочӗсем — 4, катерсем—8, боеприпас, хӗçпӑшал, снаряжени тата апат-çимӗç склачӗсем — 357.

Тӑшманӑн 100.200 салтакӗпе офицерне, вӑл шутра 63.300 нимӗçе, ТЫТКӐНА ИЛНӖ.

Çапла ӗнтӗ, УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт çарӗсем 12 кун хушши наступлени тунӑ вӑхӑтра тӑшман хӑйӗн çар техникин чи кирлӗ хатӗрӗсемпе çыннисене пӗтӗмпе çакӑн чухлӗ çухатнӑ: тыткӑна илнисемпе вилнисем—210.200, самолетсем — 145, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем — 420, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем—2.900, минометсем — 1.240, пулеметсем — 7.700, автомашинӑсем — 20.081.

* * *

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронтпа 3-мӗш фронт çарӗсем, пӗрпӗринпе çыхӑнса кӗрешсе, 12 кун хушши наступлени тунӑ вӑхӑтра нимӗçсемпе румынсен кӑнтӑрти çарӗсен группировкине аркатса тӑкнӑ, Молдаван ССР-не тата Украинӑри Измаил облаçне пӗтӗмӗшпех ирӗке кӑларнӑ. Хӗрлӗ Çарӑн наступленине пула Румыни ку вӑрçӑра Гитлер Германийӗпе пӗр майлӑ пулса вӑрçма пӑрахрӗ. Çав вӑхӑт хушшинчех тӑшман хӑйӗн çар техникин чи кирлӗ хатӗрӗсемпе çыннисене çакӑн чухлӗ çухатнӑ: вилнисем—210.000 салтакпа офицер, самолетсем — 351, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем—956, тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем — 5.576, минометсем—3.261, пулеметсем — 19.105, автомашинӑсем—46.640.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронтпа 3-мӗш фронт çарӗсем августӑн 20-мӗшӗпе 31-мӗшӗ хушшинче тӑшманӑн 208.600 салтакӗпе офицерне, вӑл шутра 97.100 нимӗçе, тыткӑна илнӗ. Тыткӑна илнисем хушшинче — нимӗçсен 7-мӗш армейски корпусӗн командирӗ артиллери генералӗ ХЕЛЛЬ, нимӗçсен 30-мӗш армейски корпусӗн командирӗ ПОСТЕЛЬ генерал-лейтенант, нимӗçсен 79-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ВАЙНКНЕХТ генерал-лейтенант, нимӗçсен 9-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ГЕББ генерал-майор, нимӗçсен 302-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ фон БОГЕН генерал-майор, нимӗçсен 282-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ФРЕНКИНГ генерал-майор, нимӗçсен 62-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ТРОНЬЕ генерал-майор, ЯССЫ хулин коменданчӗ ШТИНГЕЛЬ генерал-майор, нимӗçсен 106-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ РИНГЕНБЕРГ полковник, нимӗçсен 258-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ГИЛЬЧЕР РУДОЛЬФ полковник, нимӗçсен 76-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ фон БИССИНГ полковник, румынсен 1-мӗш армейски корпусӗн командирӗ корпус генералӗ РАДУ ГЕОРГЕ, румынсен 1-мӗш армейски корпус штабӗн начальникӗ бригада генералӗ ДИМИТРЕСКУ, румынсен 7-мӗш армейски корпусӗн артиллери командирӗ бригада генералӗ КОЗМА ГЕОРГЕ, румынсен 5-мӗш армейски корпусӗн снабжени начальникӗ бригада генералӗ БОРУИН ГЕОРГЕ, румынсен 1-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ бригада генералӗ САЙДАК АЛЕКСАНДР, румынсен 14-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ бригада генералӗ ВОЙКУ, румынсен 13-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ дивизи генералӗ ДМИТРИУ, румынсен 1-мӗш гвардейски пехотнӑй дивизийӗн командирӗ бригада генералӗ ОПРИШ СТЕФАН, румынсен 110-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ дивизи генералӗ СТЕНЕСКУ ТРОЯН, румынсен 110-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗн заместителӗ бригада генералӗ СПИРИА, румынсен 20-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ бригада генералӗ ТЕОДОРЕСКУ.

Вӗлернисем хушшинче çаксен ӳчӗсене тупнӑ: нимӗçсен 4-мӗш армейски корпусӗн командирӗ — пехота генералӗ МИТ, нимӗçсен 15-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ШПЕРИЛЬ генерал-майор, нимӗçсен 294-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ЭЙХШТЕДТ генерал-майор, нимӗçсен 384-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ДЕ-САЛЕНГРЕ-ДРАББЕ генерал-лейтенант, нимӗçсен 306-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ БЛЮМКЕ полковник, нимӗçсен 320-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ШИЛЬ полковник.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровӗнчен

СЕНТЯБРӖН 2-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Сентябрӗн 2-мӗшӗнче пирӗн çарсем БУХАРЕСТ хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре ДУНАЙ шывӗн çурçӗр хӗррине ФЕТЕШТИ ялӗнчен пуçласа ОЛТЕНИЦА хули патне çитиччен пӗтӗмӗшпех тӑшмантан тасатнӑ. ОЛТЕНИЦА хулипе чугун çул станцине тата халӑх пурӑнакан ытти 70 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—ГРУЮ, БУДЕШТИ, КУРКАНУ, УЛМЕНИ, ВЭРЭШТИ, РОСЕТИ, ФЕТЕШТИ ятлӑ пысӑк ялсем тата ПЛЭТЭРЕШТИ, ГЭЛБИНАШИ, ВАСИЛАЦИ, БУДЕШТИ, КУРКАНУ, РЕШИЕ ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

КОНСТАНЦА хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн çарсем ДУНАЙ шывӗнчен пуçласа ХУРА ТИНЕСЕ çитиччен Румынипе Болгари хушшинчи чикӗ çине тухнӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ОСТРОВ, ГРЫЛИЦА, БЭНЯСА, ИОН КОРВИН, ДОМБРОМИРУ-ДИН-ВАЛЕ, ИНДЕПЕНДЕНЦА, КОБАДИН, ГЮВЕНЛИЯ ятлӑ ялсем тата ДЖЕНЕРАЛ ЧЕРНАТ, ЧИОКЫРЛИА, ЧЕОБЭНИЦА, КАСИЧА, КОБАДИН, ГЮВЕНЛИЯ ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ.

Сентябрӗн 1-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 23 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 34 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ КРЕТИНГА ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ЙЫШЛӐН ВӖÇСЕ КАЙСА ТАПӐННИ

Сентябрӗн 2-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн инçене вӗçекен авиаци Кретинга чугун çул узелне (Мемель хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре) йышлӑн вӗçсе кайса тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула, пушарсем тухнӑ, вӗсенчен иккӗшӗ вӑйлӑ пушарсем пулнӑ. Тӑшманӑн çар эшелонӗсем çуннӑ. Чугун çул узелӗн çурçӗр-хӗвеланӑç пайӗнче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

СЕНТЯБРӖН 3-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Сентябрӗн 3-мӗшӗнче пирӗн çарсем ПЛОЕШТИ хулинчен çурçӗртерехре тата хӗвеланӑçнерехре малалла куçса пынӑ, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла тытса илнӗ, вӑл шутра — ВЕЛЕНИ-ДЕ-МУНТЕ, МАГУРЕЛЕ, ФИЛИПЕШТИ, РЭСВАДУ, КОМИШАНИ, БЭЛЕНИ, ДОБРА ятлӑ пысӑк ялсем тата ВАЛЕНИ-ДЕ-МУНТА, ЛУКА ЭЛЕФТЕРНЕСКУ, ЛИПНЕШТИ, ГЭДЖЕНИ ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

БУХАРЕСТ хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн çарсем ДЖУРДЖУ хулипе ОЛТЕНИЦА хули хушшинче ДУНАЙ шывӗн çурçӗр хӗррине тӑшмантан пӗтӗмӗшпех тасатнӑ. ФРАСИНУ, МЕЛЕТИЕ, ПЕТРИЛЕ, ПУЕНИ, ГРЕАКА, КЭС ЧОАРЕЛЕ, КИРНОДЖИ ятлӑ ялсене тата ЖИЛАВА, СИНТЕШТИ, ВИДРА, ГРОДИШТЯ, КОМАНА, МИХАЙ БРАУ, БЭНЯСА, ФРАТЕШТИ ятлӑ чугун çул станцийӗсене туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ.

Сентябрӗн 2-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 21 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 20 самолетне персе ӳкернӗ.

Совет Союзӗпе Финлянди хушшинчи ӗçсем çинчен

Августӑн 25-мӗшӗнче Финляндин Стокгольмри посланникӗ г-н Грипенберг Совет Союзӗн посланникне А. М. Коллонтай юлташа Финляндин ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗн г-н Энкелӗн çак заявленине панӑ:

«Сире çакӑн çинчен пӗлтерме тивӗçлӗ тесе шутлатӑп: Финлянди республикин президенчӗ тата Финлянди правительстви Финлянди республикин Стокгольмри министрне Грипенберг господина Сирӗн урлӑ Совет правительствинчен Финляндипе Совет Союзӗ хушшинче перемири е мир тӑвасси çинчен, е тата ытти ӗçсем çинчен калаçса татӑлма Финлянди правительстви яракан делегацие Мускава йышӑнасси пирки ыйтма полномочи пачӗ».

Кунсӑр пуçне г-н Грипенберг А. М. Коллонтай юлташа вербальнӑй нота панӑ. Çав нотӑра çапла каланӑ: Финлянди республикин президенчӗ «августӑн 17-мӗшӗнче ун патне Германи Рейхсканцлерӗ хушнипе пынӑ Кейтель фельдмаршала çакӑн çинчен пӗлтернӗ: эпӗ хама Финляндин малтанхи президенчӗ Рюти Германи правительствипе тунӑ килӗшӳпе çыхӑнса тӑратӑп тесе шутламастӑп», тенӗ. Çакна май ӗнтӗ Совет правительстви А. М. Коллонтай юлташа Финлянди правительствине августӑн 29-мӗшӗнче çакӑн çинчен пӗлтерме хушнӑ:

«Финлянди правительстви малтанлӑха палӑртнӑ çак условисемпе килӗшсен кӑна Совет правительстви Финлянди правительстви яракан делегацие йышӑнма пултарать:

Финлянди правительствин вӑл Германипе çыхӑну тытма пӑрахасси çинчен пурне те пӗлтермелле, Совет правительствин çак сӗнӗвне Финлянди правительстви йышӑннӑ хыççӑн икӗ эрне хушшинче, кирек мӗнле пулсан та кӑçалхи сентябрӗн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр, Германин хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсене Финляндирен илсе тухса каясси çинчен Германи умне требовани лартмалла, Германи хӑйӗн хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсене Финляндирен кӑтартнӑ срокра илсе тухса каймасан, нимӗçсен хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсене хӗçпӑшалсӑрлантармалла та вӗсене, тыткӑна лекнӗ çар çыннисем вырӑнне хурса, союзниксен аллине памалла.

Финлянди правительстви çак малтанхи условипе килӗшсен, мир çинчен, е ытти ӗçсем çинчен калаçса татӑлас тӗлӗшпе Финлянди правительстви яракан делегацие Совет правительстви Мускава йышӑнма килӗшет».

Çакӑнпа пӗрлех г-н Грипенберга çакӑн çинчен те пӗлтернӗ: ку ответ пирки Совет правительстви Англи правительствипе калаçса татӑлнӑ тата ун пирки США правительстви те нимӗн те хирӗçле каламан.

Сентябрӗн 2-мӗшӗнче г-н Грипенберг А. М. Коллонтая Финлянди президенчӗн Маннергеймӑн çырӑвне панӑ. Çав çырура Финлянди президенчӗ çапла каланӑ: Финлянди правительстви Совет правительствин малтанлӑха лартнӑ условийӗ çине ответ паричченех Германи çарӗсене Финлянди территорийӗн пӗр (кӑнтӑрти) пайӗнчен хӑй ирӗкӗпе эвакуацилес е çав çарсене тытса чарас ӗçе Финлянди хӑех туса ирттерме пулать. Кунсӑр пуçне Финлянди президенчӗн çырӑвӗнче фронтӑн пӗр пайӗнче (кӑнтӑрти пайӗнче) вӑрçӑ ӗçӗсене чарса лартма тата фронтӑн çав пайӗнче Финлянди çарӗсене Совет Союзӗпе Финлянди хушшинчи 1940 çулхи чикӗ çине чакарса тӑратма, çавӑн пекех совет çарӗсене те çав лини çине куçарма сӗннӗ.

Çакӑн çумне хушса г-н Грипенберг çапла каланӑ: Германипе çыхӑну тытма пӑрахасси çинчен Финлянди правительстви Совет правительстви ыйтнӑ пек пӗлтерессине Финлянди президенчӗн çырӑвӗ çине Совет правительстви ответ панӑ хыççӑн туса ирттерет, тенӗ. Кунсӑр пуçне г-н Грипенберг çапла каланӑ: нимӗç çарӗсене Финляндин çурçӗр пайӗнче хӗçпӑшалсӑрлантарас ӗçе те финсем хутшӑнма хатӗр тӑраççӗ, анчах малтан вӗсем çак ӗçре Совет Союзӗн çар командованийӗ пулӑшасси тата çак тӗлӗшпе пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗçлесси çинчен Мускавра калаçса татӑласшӑн, тенӗ.

Финсен юлашки заявленийӗ çине Совет правительстви сентябрӗн 3-мӗшӗнче ответ панӑ. Çав ответра çапла каланӑ: Совет правительстви çӳлте кӑтартнӑ малтанхи условие Финлянди правительствине çине тӑрсах йышӑнма хушать, тенӗ. Уйрӑмӑн илсен, çаксене тумалла: Финлянди правительствин вӑл Германипе çыхӑну тытма пӑрахасси çинчен тата нимӗç çарӗсене сентябрӗн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр Финлянди çӗршывӗнчен илсе тухса кайма хушасси çинчен, Германи çарӗсене Финляндирен кӑтартнӑ срокра илсе тухса каймасан, нимӗç çарӗсене хӗçпӑшалсӑрлантарасси тата вӗсене, тыткӑна лекнӗ çар çыннисем вырӑнне хурса, союзниксен аллине парасси çинчен пурне те пӗлтермелле. Совет Союзӗ панӑ ответра çавӑн пекех тата çапла каланӑ: Германи хӑйӗн çарӗсене Финляндирен сентябрӗн 15-мӗшӗччен илсе тухса каймасан, Совет правительстви нимӗçсен хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсене хӗçпӑшалсӑрлантарас ӗçре Финлянди çарне пулӑшма килӗшет, тенӗ. Çакӑнпа пӗрлех, çӳлте кӑтартнӑ условие Финлянди правительстви пурнӑçа кӗртсен, фронтӑн кӑнтӑрти пайӗнче вӑрçӑ ӗçӗсене чарма Совет правительстви килӗшнӗ. Совет правительстви ытти мӗнпур ыйтусене перемири çинчен калаçнӑ чухне татса памалла пулать тесе каланӑ.

СССР НАРКОМИНДЕЛӖН ИНФОРМАЦИ БЮРОВӖ.

Совет Союзӗ тӑрӑх

Алтайри трактор заводӗнчи научнӑй сесси

Алтайра машинӑсем тӑвас ӗçе вӗрентекен институтӑн тата трактор заводӗн научнӑй работникӗсен сессийӗ пулса иртнӗ. Çав сессире 250 çын пулнӑ — инженерсем, техниксем, стахановецсем тата институтӑн научнӑй сотрудникӗсем. Сесси пуринчен ытла трактор конструкцине лайӑхлатас ыйтусене сӳтсе-явнӑ.

Заводри конструкторсем, Совет Союзӗнче трактор тӑвас ӗçӗн чи юлашки çитӗнӗвӗсене шута илсе, лайӑхлатнӑ трактор туса хатӗрленӗ. Çак çӗнӗ тракторӑн вӑйӗ халь туса кӑларакан тракторсеннинчен ытларах, унӑн уйрӑм пайӗсем хальхи тракторсеннинчен сахалтарах çийӗнеççӗ, çав тракторсене пӑхма та, тытса пыма та çӑмӑлтарах тата вӗсен сӑнӗ те илемлӗрех.

Сессире пулнӑ работниксем Алтайри трактор заводӗ туса кӑларакан тракторсене тата ытларах лайӑхлатас тӗлӗшпе сӗнӳсем панӑ тата çӗнӗ йышши тракторсене часрах тума тытӑнма сӗннӗ. (ТАСС).

ХУЛАСЕМПЕ ЯЛСЕНЧИ ÇАМРӐКСЕНЕ РЕМЕСЛА УЧИЛИЩИСЕМПЕ ЧУГУН ÇУЛ УЧИЛИЩИСЕНЕ ТАТА ФЗО ШКУЛӖСЕНЕ ВӖРЕНМЕ ИЛЕС УМӖН

Сентябрӗн 15-мӗшӗнчен пуçласа октябрӗн 15-мӗшчен пирӗн çӗршывра хуласемпе ялсенчи çамрӑксене ремесла училищисемпе чугун çул училищисене тата ФЗО шкулӗсене вӗренме илеççӗ (мобилизацилеççӗ).

ВЦСПС секретариачӗ çав мобилизацие хатӗрленес тата ирттерес ӗçе профсоюз организацийӗсен хутшӑнмалли çинчен постановлени йышӑннӑ. Профсоюзсен центрти, облаçсенчи тата фабрикӑсемпе заводсенчи комитечӗсен çав училищӗсемпе шкулсене илесси çинчен анлӑн ӑнлантарса памалла, çамрӑксене призыв пункчӗсенче культура енчен пулӑшас ӗçе организацилемелле, шкулсем вӗренекенсене йышӑнма мӗн чухлӗ хатӗррине тӗрӗслемелле.

Общежитисене, вӗренӳ пӳлӗмӗсене тата столовӑйсене юсаса, унта кирлӗ оборудованисем вырнаçтарас ӗç çине уйрӑмах тимлӗн çаврӑнса пӑхма хушнӑ. (ТАСС).

ЯСНАЯ ПОЛЯНАНА ЮСАÇÇӖ

Л. Н. Толстойӑн «Ясная Поляна» ятлӑ паçминчи вӑрмана тепӗр хут лартса ӳстерме пуçланӑ. Нимӗç оккупанчӗсем 1941 çулта унти йывӑççене нумайӗшне касса, çунтарса пӗтернӗ, пӗвесемпе çулсене ишсе, пӑсса пӗтернӗ.

Ятарласа тунӑ комисси (унӑн председателӗ — РСФСР Вӑрман промышленноçӗн Халӑх Комиссарӗ Колданов юлташ) Ясная Полянӑри вӑрмана тепӗр хут лартса ӳстерме план тунӑ. Виçӗ çул хушшинче çав вӑрмана аслӑ писатель пурӑннӑ чухнехи пекех йӗркелеме йышӑннӑ. Пин йывӑç ытла лартмалла. Мӗнпур пӗвесемпе çулсене, цветниксемпе газонсене юсамалла. Çав вӑрмана тепӗр хут лартса ӳстермешкӗн çур миллион тенке яхӑн укçа пама палӑртса хунӑ.

Халӗ Ясная Полянӑна çав ӗçе тума кирлӗ материалсемпе йывӑççем пыма пуçланӑ. (ТАСС).

Виççӗмӗш пятилетка заемӗн (тӑваттӑмӗш çулхи кӑларӑмӗн) 11-мӗш вылявӗ пулса иртнӗ

Августӑн 27-мӗшӗнче Мускавра Виççӗмӗш пятилетка заемӗн (тӑваттӑмӗш çулхи кӑларӑмӗн) 11-мӗш вылявӗ вӗçленнӗ. Выляв икӗ кун пынӑ. Вылявра 644.000 выигрыш пулнӑ, пӗтӗмпе 102 миллион та 522 пин тенкӗлӗх. (ТАСС).

И. А. КРЫЛОВ ВИЛНӖРЕНПЕ 100 ÇУЛ ТУЛТАРАС УМӖН

Кӑçал ноябрӗн 21-мӗшӗнче И. А. Крылов вилнӗренпе 100 çул тултарать. Чӑваш АССР Совнаркомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, çав куна паллӑ туса ирттерме комисси тунӑ. Комисси составне И. С. Тукташ (председателӗ), И. К. Иванов, К. Е. Евламаьев, А. Д. Кӑлган, С. В. Эльгер, С. А. Шумков (Шавлы), И. И. Илларионов, А. А. Эсхель, П. Т. Золотов, В. Я. Яковлев, Н. Е. Журавский юлташсене кӗртнӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ комиссие И. А. Крылов вилнӗренпе 100 çул тултарнӑ май Шупашкарта чаплӑ лару ирттерме, Крылов произведенийӗсене Чӑваш республикинчи ӗççыннисем хушшинче сарас тӗлӗшпе тумалли ӗçсене пурнӑça кӗртме тата райсоветсемпе хула совет исполкомӗсене Крылов вилнӗренпе 100 çул тултарнине паллӑ туса ирттерме, Чӑвашгиза Крылов произведенийӗсене пичетлесе кӑларма хушнӑ.

Вӗренме лайӑх условисем туса панӑ

ИШЛЕЙ. Район центрӗнчи вӑтам шкул çӗнӗ вӗренӳ çулне пур енӗпе те тӗплӗн хатӗрленсе кӗтсе илчӗ. Шкул работникӗсем тӑрӑшса ӗçленипе, классене тасатса шуратнӑ, кӑмакасене юсаттарнӑ, партӑсем çителӗклӗ туса хатӗрленӗ. Вӗренӳре кирлӗ хатӗрсем те çителӗклех пур. Шкул валли 400 кубометр вутӑ касса хатӗрленӗ, 100 кубометр турттарса тухнӑ. Вӗренекенсене вӗри апат çитерме пахча-çимӗçсем çителӗклӗ пулаççӗ. Пӗр гектар ыраш, 4 гектар тулӑ вырса пухса кӗртнӗ.

Тӗплӗн хатӗрленнине пула, вӗренӳ те ӑнӑçлӑн пуçланчӗ. Ачасем шкула йӗркеллӗ çӳреççӗ. Учительсен коллективӗ вӗсене çирӗп тата тӗрӗс воспитани парассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшать.

(Хамӑр инфор.).

Çар ӗçне вӗрентме япӑх хатӗрленнӗ

Вӗренӳ çулӗн малтанхи кунӗсенчех Шупашкарти шкулсенче ачасене çар ӗçне вӗрентме начар хатӗрленни палӑрчӗ. Спорт площадкисем туса пӗтермен, çавӑн пекех çар ӗçне вӗрентме кирлӗ япаласене те çителӗклӗ хатӗрлемен. Хӑшпӗр шкулсенче тата военрукcем те çитмеççӗ.

Çамрӑк ӑрӑва çирӗп сывлӑхлӑ, чӑтӑмлӑ çын пулма пӑхса ӳстермелле. Çакна тума шкул работникӗсемпе çутӗç органӗсен çар ӗçне лайӑх вӗрентме кирлӗ япаласене пӗтӗмпех сывӑх кунсенчех хатӗрлесе çитерес пулать. Ку ӗçре вӗсене партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсем пулӑшма тивӗçлӗ. Çывӑх вӑхӑтрах военруксене те тупса çитермелле.

Çар ӗçне вӗрентес ӗçе лайӑхлатас тӗлӗшпе тимлӗн тӑрӑшас пулать. Хальхи вӑхӑтра хӑшпӗр шкулсенче çар ӗçне вӗрентнӗ çӗрте плансӑрлӑх, йӗркесӗрлӗх пур-ри сисӗнет. Вӑл йӗркесӗрлӗхсене тӗпренех пӗтерсе, пулас воинсене çирӗп пӗлӳ, тӗрӗс воспитани памалла.

И. В.

Вуникӗ учебник тухнӑ

Чӑвашсен Государство Издательстви кӑçалхи план тӑрӑх пуçламӑш тата вӑтам шкулсем валли çӗнӗрен вуникӗ учебник кӑларнӑ. Вӗсем пурте çӗнӗ вӗренӳ çулӗ пуçланнӑ тӗле — сентябрӗн 1-мӗшӗччен— КОГИЗ тата Союзпечать системисем урлӑ вырӑнсене çитмелле пулнӑ.

Октябрӗн 1-мӗшӗччен тата тӑватӑ учебник тухать.

Чӑваш АССР-ӗн КОНСТИТУЦИЙӖ

Çак кунсенчех Чӑваш АССР-ӗн Конституцийӗ чӑвашла тата вырӑсла чӗлхесемпе пӗр кӗнеке пулса тухать. Кӗнекен тиражӗ—2500 экземпляр.

«ПИОНЕР ВОЖАТАЙНЕ ПУЛӐШМА»

Пирӗн республикӑра пионерсен организацийӗ кулленех ӳссе пырать. Анчах вожатайсем валли юлашки 2—3 çул хушшинче нимӗнле литература та тухман. Çавна шута илсе, Чӑвашгосиздат пионерсем хушшинче мӗнле ӗçлесе пымалли çинчен калакан инструкциллӗ материалсен сборникне кӑларать. Çав кӗнеке çак кунсенчех тухать.

Сентябрь 5 — Сентябрь 15

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх

Мала тухассишĕн кашни колхоз тăрăшмалла

ЧКАЛОВСКОЕ. (Телефонпа). Иртнĕ çул пирĕн районри колхозсем тырпулсене кая юлса пухнă пирки пысăк сиен тÿсрĕç. Кăçал иртнĕ çулхи йăнăшсене тăвас мар тесе, нумай колхозсем тырпулсене пухса кĕме лайăх хатĕрленсе тухрĕç.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление тата вăрнарсем чĕнсе каланине кашни колхозпа бригадăра тĕплĕн сÿтсе явни ĕçе нумай хăвартлатрĕ. Кашни колхозрах эпир уйрăм сдельщинăпа ĕçлессине организацилерĕмĕр.

Кĕрхи тата çурхи тырăсене районри колхозсем 85 процент ытла вырса пухнă. Вĕсенчен 40 процентне яхăн капана хывнă. 30 процент çапнă. Тырă выранассипе пĕр вăхăтрах, авăн çапасси, государствăна тырă парасси тата ыраш акасси те районри чылай колхозсенче ăнăçлăн пырать. «Красный Октябрь» колхоз пур тĕрлĕ тырăсене те вырса пĕтерчĕ. Ĕçĕн пахалăхĕ аван. Çак колхозри ĕçĕн ăнăçлăхĕ—уйрăм сдельщинăпа ĕçленинче тата машинăсемпе туллин усă курнинче. Кунта 3 жнейкăпа кашни кунах 20 гектара яхăн тырă вырнă. Уйрăмăнах Якушова юлташăн паха ĕçне палăртмалла. Унăн жнейки пĕрре те чарăнса тăман, çавăнпа вăл кашни кунах нормăна икĕ хут тултарса ĕçлерĕ. Кĕлте çыхакансем хушшинче те стахановла ĕçлекенсем пулчĕç. Г. Макова колхозница 400 кĕлте вырăнне 1005 кĕлте çыхса пычĕ. Ку колхоз августăн 17-мĕшĕ тĕлне ыраш акса пĕтерчĕ, акасса пĕтĕмпех икĕ хут çĕртме тунă çĕр çине сеялкăпа акнă. Государство умĕнчи парăмсене парса татрĕ. Тырă леçес ĕçре машинăсемпе те, вăкăрсемпе те усă курчĕç. Ултă вăкăрпа кашни кунах тырă турттарчĕç. «Кзыл-тан» колхоз та (председателĕ Фейзулин юлташ) тырă выранассине, ыраш акассине тата государствăна тырă парассине пĕтĕмпех вĕçлерĕ. Кунта та тырă турттарнă çĕрте 8 вăкăрпа туллин усă курчĕç. Анчах районра юлса пыракан колхозсем нумай-ха.

«Правда», «Победа», «Путь Ленина», «Родина», «Первомайски» колхозсем, ытти колхозсемпе пĕр условирех пулсан та, чăтма çук юлса пыраççĕ. Юлса пынин тĕп сăлтавĕ — ĕçе кирлĕ пек организацилеме пĕлменнинче тата машинăсемпе туллин усă курманнинче. «Красное знамя» колхозра 3 жнейка пур, анчах та вĕсемпе тырă вырма тухнăранпа кирлĕ пек усă курман. Çавасемпе те усă курмаççĕ. Колхоз председателĕ Горбунов юлташ тунă ĕçе бригадирсенчен йышăнмасть. Çавна пула ĕç пахалăхĕшĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Ана çине пучахсем тăккаланса юлаççĕ, çĕмелсемпе суратсене тăпăл-тăпăл тумаççĕ. Горбунов юлташ колхозниксемпе колхозницăсем ĕçленĕ çĕрте сахал пулать, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме тăрăшмасть. «Первомайски» колхоз ыраш акассипе ытла та юлса пырать. Вăл хăйĕн уйхирне вăхăтра акса пĕтерме пултараймасть курса, «Красный Октябрь» тата «Кзыл-тан» колхозсем ăна вуншар гектар акса парчĕç.

Кăçал пирĕн ăмăртура мала тухма пур условисем те çителĕклĕ. Кашни колхозникпе колхозница тырпулсене пухас ĕçре кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме хатĕр, вĕсене организацилеме пĕлни тата вăрçă вăхăтĕнчи пек ертсе пыни çеç кирлĕ. Çакна колхоз председателĕсемпе бригадирсем ăнланса илсен, ĕçе партипе правительство хăйсен постановленийĕнче кăтартнă пек туса пырсан, пирĕн район малти рете тухма пултарать.

М. МИРОНОВА.
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Вăкăрсемпе усă кураççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри чылай колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕнче вăкăрсемпе анлăн усă курма тăрăшаççĕ. «Унгастрой» колхозра комсомолецсем вăкăрсене кÿлме вĕрентнĕ. Халĕ çав вăкăрсемпе кĕлте кÿреççĕ. «Труженник» колхозра 5 вăкăрпа кĕлте кÿреççĕ. М. Иванов колхозник вăкăрпа кулленех 13—14 лав кĕлте кÿрет. Вăкăрпа лайăх ĕçленĕшĕн ăна районри Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

Ив. ХАТАЕВСКИЙ.

* * *

ШАХАСАН. Районри колхозсенче вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ. Ухманти «Победа» колхозра ĕçе вĕрентнĕ вăкăрсем 22. Вĕсемпе кĕрхи тырăсем акнă вăхăтра, кĕлтесене капана хывнă çĕрте туллин усă курчĕç. Халь вăкăрсемпе государствăна тырă леçеççĕ. Кашни кунах вĕсемпе тырă пама икшер хутлаççĕ. Çапла майпа вăкăрсемпе кашни кун государствăна 140 центнер тырă леçеççĕ.

Халь колхозниксем фермăри сĕт сахал паракан ĕнесене ĕçе вĕрентеççĕ. Именеврари Доронин ячĕпе тăракан колхозра 6 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Вĕсемпе кĕлте кÿреççĕ, государствăна тырă леçме каяççĕ.

Сителти «Победа» колхозра тырă 11 вăкăрпа турттараççĕ. Кашни вăкăрпа 3,5 центнер тырă илсе каяççĕ.

Вăкăрсемпе Çĕнĕ Чалкасси ялсоветĕнчи «Новая жизнь» колхозра та туллин усă кураççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Икĕ колхозăн икĕ тĕрлĕ ĕç

Пысăк Упакасси ялсоветне (Йĕпреç р-нĕ) 5 колхоз кĕрет. Вĕсенчен «Путиловкăпа» «Строитель» колхозсен çĕрĕсем юнашар та пĕр пекех. Анчах «Строитель» колхозăн тырпулĕ çулсеренех начар пулать, кунта колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх икĕ çул ĕнтĕ тырă валеçсе паман. «Путиловка» колхозра вара ĕçсем пачах та урăхла. Кунта çулсеренех тухăçлă тырпул туса илеççĕ, çавăнпа тырă государствăна валли те, колхозниксем валли те çителĕклех пулать. Колхоз иртнĕ çул обязательствăсем тăрăх парса татнă хыççăн государствăна 3.200 пăт тырă сутрĕ. Кăçал та кунта ĕçкунĕ пуçне 3-шер килограмм кая мар валеçме шутлаççĕ.

«Путиловка» колхозăн кĕрхи тырăсем 205 гектар пулнă, вăл ăна августăн 12-мĕшĕ тĕлне, 7 ĕç кунĕ хушшинче, вырса пĕтерчĕ. Вырнă тырăран 120 гектар çинчи кĕлтене капана хывнă, 75 гектар çинчи тырра çапса государствăна 350 центнер панă. Колхоз кăçал 205 гектар ыраш акса хăварчĕ. Çуртырисене те çак кунсенчех вырса пĕтереççĕ. Вĕсене тракторпа ĕçлесе паман. Ĕçлеме пултаракан лашасем — 28 пуç, кунсăр пуçне 6 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Колхоз уйĕнче пĕтĕмпе 180 çын ĕçлет. Мĕнпур ĕç кунта план тăрăх, йĕркеллĕ пулса пырать.

Юнтапари «Строитель» колхозăн ĕçлеме пултаракан 16 лаша пур, уя пурĕ 109 çын ĕçлеме тухма пултарать. Анчах вĕсем 75 гектар çинчи ыраша августăн 21-мĕшĕнче тин (15 ĕç кунĕнче) вырса пĕтерчĕç, çуртырри вырма тин çеç тытăннă, пĕтĕмпе 96 гектар вырмалла, 65 гектар ыраш акмалла пулнă пулсан, ăна халĕ те акса пĕтермен. Кĕлте турттарса капана хывас, авăн çапас ĕçсем чăтма çук япăх пыраççĕ. Государствăна мĕн пурĕ те 5 центнер çеç тырă панă. Ку колхоз районри ытти колхозсенчен юлса пырать. Ĕç дисциплини начар, кашни кунах 15—20 çын ним сăлтавсăр ĕçлеме тухмаççĕ. Тырă вырма тухакансем те вăхăта хăйсем валли курăклă ыраш хăмăлĕ çулса килĕсене турттарас тĕлĕшпе ирттереççĕ. Ыраш вырнă чухне вĕсем пучахне тенĕ пек çеç касса илеççĕ, хăмăлне, курăклă пирки, çулса килĕсене йăтаççĕ.

Иртнĕ çул кĕртыррисене октябрĕн 2-мĕшĕнче çеç акса пĕтернĕ, çавăнпа та вăл курăклă пулнă. Ыраш гектартан 12—15 пăтран ытла мар тухать. Кăçал та çавăн пекех ĕçлеççĕ вĕсем. Колхоз председателĕ Краснов ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç нимĕнле мера та йышăнмасть. Тырă вырнă çĕрте машинăсемпе тата кĕрепленлĕ çавасемпе ĕçлемеççĕ. Ĕç нормине иртерсе тултаракансем мĕн пурĕ те 3 колхозница çеç шутланать. Вĕсен ĕçри паха опычĕпе нормăна тултарайман колхозниксене паллаштармаççĕ.

«Путиловка» колхоз Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозпа юнашар. Вăл, кольцовкăсен опытне илсе, ĕçре усă курать. Кунта 4 бригадăра 16 звено. Звеноводсем ирхине кашни çынна пĕр кун хушшинче тумалăх участок виççе параççĕ. Ĕç нормине тултаракансене хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх ĕçкунĕсем хушса параççĕ. Колхозниксене пĕрлешÿллĕ столовăйра апатлантараççĕ. Çапла вара кашни çын пĕр-пĕринчен юласшăн мар ĕçлет. Колхозниксем, ĕçе çуталиччен тухса, сĕм тĕттĕм пулсан тин каялла кĕреççĕ. Икĕ норма ытларах тултаракансем кунта 24 çын. 66 çулхи Степан Гончаровпа унăн 70 çула çитнĕ карчăкĕ те çавапа çулма тухаççĕ, вĕсем ĕç нормине 150 процент таран тултарса пыраççĕ.

Колхозра социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. 4 бригада пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет. Ыраш вырнă чухне 4-мĕш бригада мала тухрĕ (бригадирĕ 20 çулхи хĕрача М. Никитина юлташ), вăл пĕр кун хушши ĕçлесе III-мĕш бригадăна пулăшса пачĕ. «Пирĕн Марье маттур, ăна çĕнтерме хĕн», — теççĕ ытти бригадирсем.

Колхоз председателĕ коммунист Тозеков юлташ яланах уйра. Вăл пĕтĕм ĕçе лайăх пĕлсе тăрать, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пырать. Пушă вăхăтсем пулсанах (çумăр çуса нÿретнĕ чухне) Тозеков юлташ колхозниксене махорка çулçисене тасатма, махорка участокне капкалатма ярать.

Çапла икĕ колхозра икĕ тĕслĕх куратпăр. «Путиловка» колхоз ĕçе тĕрĕс организациленĕ те пур енĕпе те малта пырать. «Строитель» колхоз хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек йĕркелемен, унăн «Путиловка» колхозран вĕренме тăрăшмалла.

М. МАРКОВ.

ГОСУДАРСТВĂНА ÇĔРУЛМИ ПАРАÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Шурçырма ялсоветĕнчи «Искра» колхоз 1944 çулшăн çĕрулми пама пуçăннă. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна 30 центнер ытла çĕрулми панă.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Республикăри ипподромра

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче Шупашкарта, республикăри ипподромра, хăвăрт юртакан ăратлă лашасене сăнамалли ăмăрту пуçланчĕ. Ăмăртăва малтанхи кун Сĕнтĕр районĕнчи «Коминтерн» колхозăн «Захват», Етĕрне районĕнчи «Борец» колхозăн «Аван», Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Шордан» колхозăн «Нарзан», çав районри «Коминтерн» колхозăн «Метан», Етĕрне районĕнчи Партин 17-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозăн «Доблестный», Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозăн «Вечерняя заря», «Зимний ветер», Çĕрпÿ районĕнчи «Красный бригадир» колхозăн «Вымпел», Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн «Запрет» ятлă лашисем тата Сăр леш енчи лаша завочĕн «Заказной», «Запрос», «Засурская», «Зорька», «Зависть» ятлă лашисем, пурĕ 18 лаша, хутшăнчĕç. Вĕсем 7 хутчен икшерĕн тата виçшерĕн юртса ăмăртрĕç.

Малтанхи кун ăмăртура уйрăмăнах Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн «Запрет» ятлă ăйăрĕ хăвăрт юртма пултарнине кăтартрĕ, вăл, 1.600 метра 2 минута та 26 секундăра юртса тухса, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. «Ипподрома усна» ячĕпе тунă приза Çĕрĕç Халăх Комиссарачĕн лаша ĕрчетес енĕпе ĕçлекен отделĕн начальникĕ Мельников юлташ Ворошилов ячĕпе тăракан колхоза пачĕ. Иккĕмĕш вырăна Етĕрне районĕнчи «Борец» колхозăн «Аван» ятлă ăйăрĕ йышăнчĕ. Вăл 1.600 метра 2 минута та 33 секундăра юртса тухрĕ.

Сăр леш енчи лаша завочĕн «Засурская» ятлă кĕсри тата «Запрос» ятлă ăйăрĕ лайăх юртма пултарнине кăтартрĕç, вĕсем 1.600 метра 2 минута та 38 секундăра юртса тухрĕç. Çавăн пекех Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозăн «Зимний ветер» ятлă лаши те 2 минута та 38 секундăра чупса тухрĕ. «Рион» тата «Вечерняя заря» ятлă ăратлă лашасем те лайăх юртма пултарнине кăтартрĕç. «Рион» 2 минута та 40 секундăра, «Вечерняя заря» 2 минута та 44 секундăра юртса тухрĕç.

Малтанхи кунах ипподромри ăмăртура йĕркелĕх тата ăмăртăва лайăх хатĕрленни палăрчĕ. Çанталăк вăйлă-çиллĕ тăнă пулин те, ипподромри çул тикĕсех мар тата курăклă пулнă пулин те, лашасем юртас тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Сăнамалли ăмăртăва халăх нумай пухăнчĕ. Ипподромра духовой оркестр вылярĕ.

Ăмăрту малалла пырать. Çитес ăмăрту кунĕ сентябрĕн 10-мĕшĕнче пулать.

Финлянди премьер-министрĕ Хакцелль радио тăрăх тухса каланă сăмах

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Финлянди премьер-министрĕ Хакцелль радио тăрăх сăмах тухса каланă. Вăл çапла пĕлтернĕ:

Хисеплĕ граждансем! Паян каçхине Финлянди сеймĕ хăйĕн хупă ларăвĕнче Финляндипе Совет Российи хушшинче перемири тăвасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухрĕ. Çак ыйту тĕлĕшпе Финлянди правительстви иртнĕ çурçул хушшинче тăтăшах ĕçлесе пынă. Юлашки вăхăтра политика тата вăрçă тĕлĕшĕнчи лару-тăру питех те çивĕчленсе кайни правительствăна çак ыйтăва татах та сеймра лартма хушрĕ. Правительство перемири тăвасси çинчен юлашки хут ыйту лартнă самантран пуçласа Финляндин вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвĕ питĕ начарланса кайрĕ.

Кăçалхи апрель уйăхĕнче кăна пирĕн фронт линийĕ государствăн кивĕ чиккисенчен чылай аяккарах тăратчĕ. Июнь уйăхĕнче, Карели перешеекĕнчи вăрçă ĕçĕсем пирĕншĕн ăнăçлă мар килсе тухнине пула, пирĕн оборона татăлса кайрĕ. Çав самантран кăшт каярах Хĕвелтухăç Карелире пире вăрçăччĕнхи чикĕ патнелле хĕстерсе çитерчĕç. Союзниксем çурçĕр тата кăнтăр Францире çарсем антарнă хыççăн Германин, пысăк пораженисем тÿссе Францире хăй оккупациленĕ районсене пĕрин хыççăн тепĕрне пăрахса хăварма лекрĕ. Германишĕн çавăн пекех Италире те вăрçă лару-тăрăвĕ ăнăçлă мар пулса тăчĕ, унта нимĕç çарĕсене çурçĕрелле, питех те инçете хĕссе çитерне. Балканра Германи хăйĕн икĕ союзникне çухатрĕ те ĕнтĕ.

Пачах та урăхла, Совет Союзĕ, вăрçăра тăтăшах çитĕнÿсем туса пырса, пĕтĕмĕшпе илсен, хăйĕн малтанхи государство чиккисене çĕнĕрен тухрĕ. Вăрçă тĕлĕшпе питех те йывăр лару-тăру пулса тăнă пирки, Германи халĕ ĕнтĕ пире çак вăрçăра кирлĕ чухлĕ пулăшу пама пултараймасть. Ăна халĕ ĕнтĕ хăйне те хăйĕн территорине сыхлама çарсем çав тери кирлĕ пулса тăчĕç. Нимĕçсем Финляндие пулăшма малтан янă хăйсен çарĕсен чылай пысăк пайне пирĕн территори çинчен чĕнсе илнĕ ĕнтĕ. Çарта нумайĕшĕсем Германи çĕнтерессине ĕненме пăрахнă.

Балтика тăрăхĕнчи çĕршывсенчи халхи ăнăçлă мар лару-тăру çакна кăтартса парать: Германи тĕрĕссипе Финн заливĕн мĕнпур кăнтăр çыранне çухатасси умĕнче тăрать. Финн заливĕн кăнтăр çыранĕ Германишĕн те, çавăн пекех Финляндишĕн те стратеги тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Германи финсен фрончĕпе халĕ ĕнтĕ интересленме пăрахрĕ. Çакă вăл Финлянди хăйĕнчен нумай хăватлăрах тăшмана хирĕç пĕччен тăрса юлнине пĕлтерет.

Виçĕ çул хушши эпир Германипе хĕçпăшал тĕлĕшĕнчен тăванлă пулса тăрас ĕçĕн йывăрлăхне тÿрĕ кăмăлпа тÿссе пытăмăр. Ун чухне вăрçăра пĕрле пулса кĕрешни тивĕçлĕ самантчен пирĕн çĕршыва хутĕлес ĕçĕн интересĕсене тивĕçтерсе тăратчĕ. Эпир 1941 çулта Германипе тунă килĕшÿ вăрçă тĕлĕшпе тунă килĕшÿ кăна пулнă.

Республикăн çĕнĕ президенчĕ, çĕршыва тытса пырас ĕçе уйăха яхăн каярах тытăннăскер, Финляндипе Германи хушшинче вăрçă тĕлĕшпе тунă кăçалхи килĕшĕве йышăнма килĕшмерĕ. Эсир пĕлетĕр, республикăн унччĕнхи президенчĕ алă пуснă çав килĕшĕве сеймра пăхса тухса çирĕплетмен. Çапла вара, çав килĕшÿ, тĕрĕссипе, унччĕнхи президент Германи умĕнче хăй тĕллĕн кăна илнĕ обязательство пулса тăрать. Халĕ, пирĕн çĕршывра урăх президент тата çĕнĕ правительство пур чухне, çÿлерех кăтартса панă килĕшÿ хăйĕн вăйне çухатрĕ, çавăн çинчен правительство Германи правительствине пĕлтерчĕ.

Çавна пула тата Финлянди лару-тăрăвĕ начарланнă пирки, республика президенчĕпе правительство Финлянди вăрçăран тухасси çинчен сеймра çĕнĕрен ыйту лартма шутларĕç. Германипе çыхăну тытма пăрахасси çинчен тата перемири тăвас шутпа Совет Российипе калаçса татăласси çинчен правительство тăратнă сĕнĕве сейм пăхса тухрĕ. Перемири тума кирли çинчен решени йышăнса, сейм правительствăна çак тĕлĕшпе тивĕçлĕ утăмсем тума хушрĕ. Ятарласа янă делегаци урлă эпир Германие Финляндишĕн хальхи лару-тăрура пулса тăнă мĕнпур ăнăçлă мар условисем çинчен пĕлтертĕмĕр. Икĕ енĕн те хăйсем валли тивĕçлĕ выводсем тума кирли уççăнах курăнса тăрать.

Пирĕн çĕршывшăн вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи лару-тăру улшăннине пула тата пирĕн халăх мир çинчен пĕтĕм чун-чĕрипе ĕмĕтленнине пула, правительство мĕнле те пулин кĕскерех срокра Совет Союзĕпе калаçса татăлма тивĕçлĕ тесе шутлать. Çакна май ĕнтĕ правительство кăçалхи августăн 25-мĕшĕнче хамăрăн Стокгольмри посланник патне Совет Союзĕн Швецири посолне пама çыру ячĕ. Çав çырура эпир Финлянди Совет Союзĕпе перемири, унтан вара мир тăвасси çинчен калаçассине çĕнĕрен хускатса яма ыйтнине кăтартса патăмăр.

Августăн 29-мĕшĕнче Совет Союзĕн Стокгольмри посольстви Совет правительствин ответне пачĕ. Унта çапла каланă:

Финляндин Германипе çыхăну тытма пăрахмалла;

Германи çарĕсене икĕ эрне хушшинче, сентябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр, Финляндирен кăларса ямалла.

Совет правительстви финсен делегацине мир тĕлĕшпе калаçма Мускава яма ирĕк пачĕ.

Эпĕ çакна палăртма тивĕçлĕ: Совет правительстви çав требованисем пирки Англипе калаçса татăлнă тата вĕсене США та ырланă. Çав условисене илсен, Финлянди правительстви вĕсене çийĕнчех сеймра пăхса тухма тăратрĕ. Сейм решенийĕ тăрăх, Финлянди правительстви Германи правительствинчен хăйĕн çарĕсене Финлянди территорийĕ çинчен икĕ эрнелĕх срокра илсе тухса кайма ыйтрĕ. Çакăнпа пĕрлех, Финлянди Германие хамăр территорипе нимĕç çарĕсен малашне усă курма юраманни çинчен асăрхаттарчĕ.

Хисеплĕ те хаклă граждансем, çакăн пек ĕнтĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, пирĕн умра тăракан ĕçсем. Пирĕн халĕ ĕнтĕ вăрçăран тухас çул çине татăклăн тăмалла. Çапла ĕнтĕ эпир хамăр çĕршывпа унăн хĕвелтухăçĕнчи аслă кÿрши хушшинче мир тăвас тĕлĕшпе малтанхи утăмсене ярса пусрăмăр. Перемири тăвас тĕлĕшпе Совет Союзĕ пирĕн умма мĕнле условисем лартасси çинчен эпир пĕлместпĕр-ха. Çав условисенче мир тăвас тĕлĕшпе Совет Союзĕ халиччен панă сĕнÿсем тивĕçлĕ вырăн йышăнаççех пулĕ. Эпĕ çакна палăртмасăр хăварма пултараймастăп: пирĕн умма пĕр сăмахсăрах парăнмалли требовани лартман.

Эпĕ пĕлетĕп, мир тăвас тĕлĕшпе правительство тунă утăмсем мĕн териц паха та кирлĕ пулса тăнине пĕтĕмĕшпех ăнланса илме пултарайман çынсем пирĕн сахал мар тупăнĕç. Çакăнпа пĕрлех, çак ĕçре ытлашши хавасланса ÿкекен çынсем те сахал мар пулĕç. Эпĕ икĕ йышши çынсене те çакăн çинчен асăрхаттарма тивĕç: мир тăвас çул çинче эпир нумай пысăк йывăрлăхсемпе тĕл пулăпăр, анчах икĕ çĕршывĕ те вăрçа пĕтерме ĕмĕтленсе тăнă чухне çак йывăрлăхсене çĕнтермелле. Халĕ, мир тĕлĕшпе пĕрремĕш утăм тунă чухне, пирĕн республика президентне тата правительствăна мĕн май килнĕ таран ытларах шанмалла. Финлянди маршалĕ Маннергейм халĕ пĕтĕмĕшпех мир тăвассишĕн ĕçлет. Пирĕн задача—хамăр хушăра пур енчен те пĕрлĕх тытасси пулса тăрать. Пирĕн хамăр президент тавра тата финн халăхĕн малашнехи кунçулне тивĕçтерес шутпа мир тăвассишĕн пыракан юхăм тавра пĕтĕçмелле.

* * *

ТАСС АСĂРХАТТАРНИ. СССР Наркоминделĕн Информаци Бюровĕ панă паянхи пĕлтерÿрен çакă курăнса тăрать: Финляндин премьер-министрĕ г-н Хакцелль тухса каланă сăмахра фактсене хытă пăснă вырăнсем чылай.

Пĕрремĕшĕнчен, Хакцелль финсен августăн 25-мĕшĕнчи сĕнĕвĕ пирки Совет правительстви августăн 29-мĕшĕнче панă ответ çинчен тĕрĕс мар калаçа панă. Совет правительстви Германи çарĕсене хĕçпăшалсăрлантарма хушни çинчен тата вĕсем сентябрĕн 15-мĕшĕччен Финляндирен тухса каймасан, вĕсене, тыткăна лекнĕ çар çыннисем вырăнне хурса, союзниксен аллине пама хушни çинчен Хакцелль пĕр сăмах та каламан.

Иккĕмĕшĕнчен, Финлянди правительстви Германипе çыхăну тытма пăрахасси çинчен тата Финляндире тăракан нимĕç çарĕсем тĕлĕшпе çÿлерехре кăтартнă мерăсем йышăнасси çинчен Совет правительстви панă сĕнÿ малтанлăха палăртнă услови пулса тăрать. Хакцелль çавăн çинчен пачах та асăнман. Вăл тата çакна каламан: Совет Союзĕ августăн 29-мĕшĕнче панă сĕнÿ малтанлăха палăртнă услови пулса тăрать, çав малтанхи условие пурнăçланă хыççăн кăна финсен делегацийĕ перемири тата мир тăвасси çинчен калаçма Мускава килме пултарать.

Тата çакăн пек ĕç çине те çавăрăнса пăхма тивет. Финсем виçĕ çул хушши «Германипе хĕçпăшал тĕлĕшĕнчен тăванлă пулса тăрас ĕçĕн йывăрлăхне тÿрĕ кăмăлпа тÿссе пыни» çинчен Хакцелль нумай калаçать тата вăл Финлянди правительстви Германи тĕлĕшпе халĕ йышăннă позици çинчен ăнлантарса пама, çакăн пирки Германи умĕнче айăпа кĕнĕ пек пулса калаçма сахал мар сăмах тупнă.

Анчах Хакцелль Финлянди Германипе çыхăну тытма тĕрĕссипех пăрахасси çинчен каламан. Финлянди Германипе çыхăну тытма пăрахасси Совет правительстви малтанлăха панă условин тĕп пайĕ пулса тăрать, çавна тусан çеç перемирипе мир тăвасси çинчен Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче калаçусем пуçланма пултараççĕ.

Франципе Бельгири тата Италири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен çарĕсем Бельги столицине—Брюсселе ирĕке кăларнă

ЛОНДОН, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем сентябрĕн 1-мĕшĕнче Дьепп, Аррас тата Верден хулисене ирĕке кăларнă.

Пирĕн çарсем Компьен вăрманĕ урлă каçса пынă май, тăшман вĕсене питĕ вăйлă хирĕç тăрать. Союзниксен çарĕсем Верден хулинче, çавăн пекех тата Сен-Миэль хулипе Коммерси хули хушшинче Маас шывĕ урлă каçнă. Сен-Дизье хулинчен çурçĕртерехри районра наступлени туса пыракан çарсем Рейн шывĕпе Марна шывне пĕрлештерсе тăракан канал патне çитнĕ.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче истребительсем тата истребитель-бомбардировщиксем тăшманăн Бельгири, Голландири тата Çурçĕр Францири транспорт объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн Ходжес генерал командир пулса ертсе пыракан 1-мĕш çарĕн икĕ колонни сентябрĕн 2-мĕшĕнче ирхине Бельги территорине кĕрсе кайнă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем, Аррас хулинчен çурçĕртерехре наступлени туса пырса, Вими районĕнче ту урлă каçнă та Лан тата Бюлли-Гренэ хулисене тытса илнĕ. Унтан хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Дуэ хулине йышăннă. Ла-Манш çыранĕнче ларакан Сен-Валери-А-Ко хули — союзниксен аллинче. Союзниксен çарĕсем Абвиль хули патне çитнĕ те Абвильпе тинĕс хушшинче Сомма шывĕ çине тухнă.

Суассон хулинчен хĕвеланăçнерехре Эн шывĕ урлă каçса кайнă. Монкорне хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре наступлени туса пыракан чаçсем Бельги чикки урлă каçса кайнă. Унтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Верден хулинчен хĕвелтухăçнелле куçса пыраççĕ.

Çанталăк начар тăнă пирки самолетсем Çурçĕр-хĕвелтухăç Франци çинче вăйлă кĕрешеймен.

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн 1-мĕш армийĕн чаçĕсем сентябрĕн 2-мĕшĕнче кăнтăрла Мобеж хули çывăхĕнче Франципе Бельги хушшинчи чикĕ урлă каçнă та Бельги çĕрĕ çине кĕрсе кайнă. Çавăн пекех тата çав чикĕ урлă Турнэ патĕнче те каçса кайнă. Турнэ вăл Брюссель хулинчен мĕн пурĕ те 45 мильăра кăна ларать.

ЛОНДОН, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Брюсселе ирĕке кăларнă. Бельги чикки урлă сентябрĕн 3-мĕшĕнче ирхине ирех каçса кайнă союзниксен çарĕсем питĕ хăвăрт Турнэ хулине ирĕке кăларнă та çурçĕрелле тата хĕвелтухăçнелле куçма пуçланă, вара каçхине çĕрле Бельги столицине Брюссель хулине кĕрсе кайнă.

Кунтан хĕвеланăçнерехре ытти танковăй соединенисем Бетюн тата Лилье хулисем урлă çурçĕр еннелле куçса пынă, Эр хули патне çитсе тухнă. Абвиль хули районĕнче Сомма шывĕ урлă хулан ик енĕпе те каçса кайнă. Кăштах çапăçнă хыççăн союзниксем Абвиль хулине ирĕке кăларнă. Союзниксен çарĕсем Сомма шывĕнчен çурçĕрелле куçаççĕ.

Гавр хулинчен çурçĕрелле тата хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем портăн тĕп оборона сооруженийĕсем патне таччăнах пырса тухнă.

Брюссельтен 40 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Бельги чикки урлă çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле наступлени туса пыракан çар колоннисем каçса кайнă. Союзниксен çарĕсен отрячĕсем Шарлеруй хули районне çитсе кĕнĕ.

Кунтан кăнтăртарахра хĕвелтухăç еннелле куçса пыракан союзниксен çарĕсем Нанси хули патне çитсе тухнă. Тепĕр тĕлте союзниксен çарĕсен пĕр пайĕ Шалена хули патĕнче Маас шывĕ урлă каçса кайнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çарĕсене атакăланă. Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем тăшманăн Голландири 6 аэродромне тапăннă. Темиçе хутчен те Брест хулин çирĕплетнĕ районне тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС ТАВРАШĔНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: американецсемпе французсен 7-мĕш армири чаçĕсем Лион хулинчен кăнтăртарахра Рона шывĕн улăхĕпе каялла чакса пыракан тăшмана хыçранах хăваласа пыраççĕ. Америка çарĕсем Гренобль хули районĕнчен çурçĕр-хĕвеланăçнелле куçнă; Кăнтăр Францире тыткăна илнĕ çынсен хисепĕ 55.000 çынтан иртсе кайнă ĕнтĕ.

Çурçĕр Италире, фронтăн Адриатика секторĕнче, 8-мĕш армин чаçĕсем, авиаци пулăшса пынипе, «Гот линине» темиçе хутчен питĕ вăйлăн пыра-пыра çапнă, По шывĕнчен кăнтăртарахра 20 миля сарлакĕш фронтра нимĕçсен оборонине татнă та 3—4 миля шалалла кĕрсе кайнă. Халĕ унта вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Америкăн 5-мĕш армири пехоти, танксем пулăшса пынипе, Флоренципе тинĕс хушшинче темиçе тĕлте Арно шывĕ урлă каçса кайнă.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Венгри çинче, Югослави çинче тата Румынин нимĕçсен аллинчи районĕсем çинче кĕрешнĕ.

Болгарин çĕнĕ правительстви

СОФИЯ, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири радио пĕлтернĕ тăрăх, регент совечĕ премьер-министр пулма Кост Муравиева лартнă, ăнах ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма хушнă. Шалти ĕçсен министрĕ пулма Виргил Димова лартнă, вăлах çулйĕрсен министрĕ пулса ĕçлемелле. Финанс министрĕ пулма Гиргинова лартнă, вăлах суту-илÿ министрĕ пулса ĕçлемелле; юстици министрĕ пулма Борис Павлова лартнă, вăлах çутĕç министрĕ пулса ĕçлемелле; çар министрĕ пулма Иван Маринов генерал-майора лартнă; çĕрĕç министрне Христо Петрова лартнă, обществăллă ĕçсен министрĕ пулма Ст. Даскалова лартнă. Мушанов, Буров тата Гичев—портфельсăр министрсем пулса ĕçлемелле.

НИМĔÇСЕМ БОЛГАРИН «НЕЙТРАЛЬНĂЙ» ТЕРРИТОРИЙĔПЕ УСĂ КУРАÇÇĔ

БУХАРЕСТ, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çакăн пек хыпарсем илнĕ: Болгарин çурçĕр-хĕвелтухăç районĕсенче, çавăн пекех тата София хулипе унăн таврашĕнче нимĕçсен Румынирен тарнă çар чаçĕсен, çĕмĕрсе тăкнăскерсен, юлашкийĕсем пытанса пурăнаççĕ. София хули урлă çурçĕр-хĕвеланăçнелле кунсеренех нимĕç салтакĕсене тиенĕ темиçе эшелон каять. Румынирен тарса ÿкнĕ нимĕçсене халĕ каллех хăйсен хĕçпăшалĕ-мĕнĕпех Болгарин çурçĕр-хĕвеланăç чикки урлă тата Югослави урлă каçараççĕ те Румыние тата Совет Союзĕпе Германи фрончĕн ытти участокĕсене яраççĕ.

Болгари влаçĕсем Румынирен тарса ÿкнĕ нимĕçсене транспорт параççĕ тата ытти майсемпе те пулăшаççĕ.

Çапла ĕнтĕ, Болгари влаçĕсем куçкĕретĕнех пулăшса тăнипе, Румынирен таракан нимĕçсем Болгарин «нейтралитечĕпе» анлăн усă кураççĕ.

ВЕНГРИРЕ ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇ ТĂРАÇÇĔ

СТАМБУЛ, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килекен хыпарсем тăрăх, Венгрире Германие хирĕç тăрас юхăм вăйланса пырать. Çапла пĕлтереççĕ: юлашки кунсенче Венгрире чылай тĕлте нимĕçсене хирĕç демонстрацисем тунă. Çавăн пирки гестаповецсем тата Венгри полицийĕ 2.000 çынна яхăн тытса хупнă.

Нимĕçсене хирĕç саботажла тата сăтăрла ĕçсем тăвасси пур çĕрте те ÿссе пырать. Венгрин кăнтăр енчи облаçĕсенче, Венгрири нимĕçсем пурăнакан районсенче, венгерсем нимĕçсен хирти тыррисене вут тĕртсе çунтараççĕ.

КĔСКЕН

* Бельгире ирĕклĕх комитечĕсем тунă. Бельгие союзниксен çарĕсем пырса кĕрсенех çав комитетсем Бельгин законлă влаçĕсене пăхăнса ĕçлеме пуçлĕç.

*Тегеранра Совет Союзĕпе Иран хушшинчи культурăллă çыхăну обществин пухăвĕнче çав обществăн хисеплĕ председателĕ Саед совет композиторне Лев Книппера Иранăн 1-мĕш степень наука орденне панă. Лев Книппера çак орденпа Иран правительстви наградăланă.

Поляксен хăрушсăрлăх корпусĕ Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕ енне куçнă

ЛЮБЛИН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Люблин хулинче поляксен хаçачĕсенче Польшăн çар организацийĕн — хăрушсăрлăх корпусĕн командованийĕн декларацине пичетленĕ. Декларацире çапла каланă: никама пăхăнман, демократиллĕ, вăйлă Польша тăвас тесе, хăрушсăрлăх корпусĕн командованийĕ Польша халăхĕн ирĕклĕх комитетне пур енчен те пулăшса тăма йышăннă. Çав корпусăн командирĕ Тарнава полковник тата унăн штабĕн начальникĕ Равич полковник Роля-Жимерский генерал патне янă çырура çапла каланă: хăрушсăрлăх корпусĕ хăйĕн мĕнпур подразделенийĕсемпе тата хĕçпăшалĕпе, снаряженийĕпе пĕрле Роля-Жимерский аллине куçать, тенĕ.

Варшаври юлашки кунсенче пулса иртнĕ ĕçсем енчен пăхсан, хăрушсăрлăх корпусĕн командованийĕ тунă çак ĕç Польшăри лару-тăрăва хакланă чухне чылай интереслă ĕç пулса тăрать. Хăрушсăрлăх корпусне ăна 1940 çулта Сикорский генерал хушнă тăрăх тунă, ăна поляксен аркатса тăкнă çарĕсен юлашкийĕсенчен тунă. Варшавăра восстани тăвиччен вăл Краевой çар шутĕнче тăнă. Çак çара ăна поляксен эмиграцири пуçлăхĕсем майлă тăракан çынсенчен тунă. Хăрушсăрлăх корпусĕнче 2.500 офицера яхăн пулнă, вĕсенчен 1.500 офицера яхăн яланхи çарта тăнă офицерсем пулнă. Хăрушсăрлăх корпусĕ тата темиçе организацие пĕрлештерсе тăнă.

Тарнава полковник хаçатсен представителĕсемпе калаçнă чухне Краевой çарти авантюристсен ушкăнĕнчен уйăрăлса кайнин сăлтавĕсем çинчен çапла каланă: Варшавăра авантюристла ĕç туса, Польшăн эмиграцири правительстви хăйĕн политикăллă тĕллевĕсене пурнăçлама тăрăшнă, вăл Краевой çар Польшăн столицине тытса илме пултарĕ тесе шанса тăнă. Çапла туса, вăл çав вăхăтра Мускава Совет правительствипе калаçма тухса кайнă Миколайчикăн позицине çирĕплетме шутланă. Тарнава малалла çапла каланă: восстани тăвас планпа килĕшмесĕр, эпĕ Варшаваран тухса кайрăм. Роля-Жимерский генерал урлă эпĕ Миколайчикпа калаçма пулĕ тесе шанса тăтăм, ăна восстани тума май çукки çинчен, восстани тума памалла марри çинчен каласа парасшăн пултăм. Анчах та Миколайчикпа калаçма май килмерĕ, мĕншĕн тесен эпĕ те, манăн юлташсем те икĕ эрне хушшинче те фронт линийĕ урлă каçаймарăмăр. Вара хăрушсăрлăх корпусĕ хăйне Роля-Жимерский аллине пама йышăнчĕ.

Тарнава каланă тăрăх, Варшаври халăх Польшăн эмиграцири правительствин, пĕр хăйшĕн çеç тăрăшса Варшавăра юн юхтарнăскерĕн, политикине хытă сивлет. Хăрушсăрлăх корпусĕ Краевой армирен уйăрăлса кайни—Польшăн эмиграцири правительствин халăха хирĕç пыракан политики пăчланса ларнине тепĕр хут кăтартса парать. Вăл тата реакциллĕ Краевой çар арканнине пĕлтерет. Çакăнпа пĕрлех вăл Польшăн ирĕке кăларнă пайĕнче халăхăн пĕрлĕхĕ çирĕпленсе пынине пĕлтерет: Польшăн çав пайĕнче Польша халăхĕн мĕнпур прогресла вăйĕсем Польшăн ирĕклĕх комитечĕ тавра пĕтĕçсе пыраççĕ.

ЛОМБАРДО ТОЛЕДАНО АРГЕНТИНĂРИ ФАШИСТСЕН ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН

МЕКСИКО, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Уругвай никама пăхăнман çĕршыв пулса тăни çулталăк çитнĕ ятпа пухнă митингра Латинла Америкăри рабочисен конференцийĕн председателĕ Ломбардо Толедано сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Уругвая Аргентина пырса тапăнасси хытă хăратса тăрать. Аргентина вăрçа çав тери васкаса хатĕрленни çинчен каласа, Толедано çапла каланă: Аргентина правительстви Уругвая тапăнма тата Ла-Плат шывĕн районĕнче çĕнĕрен вице-королевство туса хума хатĕрленет пулмалла. Аргентина шухăшĕпе, çав вице-королевствăна Уругвай, Парагвай тата Боливи кĕмелле. Толедано каланă тăрăх, Аргентина Парагвай правительствине хирĕç восстани тума хăтланать, вăл унта фашистла правительство туса хурасшăн, çав правительство пуçне Парагвайăн хальхи шалти ĕçсен министрне Панплиегăна лартасшăн.

Толедано малалла çапла каланă: Аргентина правительстви Уругвайри фашистсен ушкăнĕсене хĕçпăшаллантарать, вĕсене вăл Амесаг президента вырăнтан кăларма тата Уругвайра фашистла режим туса хума хатĕрлет. Аргентинăри фашистсем Бразилири фашистсемпе таччăн çыхăннă. Хальхи вăхăтра Бразили правительствинче политикăллă икĕ ушкăн пĕр-пĕринпе кĕрешеççĕ. Çав ушкăнсенчен пĕри Бразилире фашистсен диктатури туса хурасшăн, унăн пуçлăхне хальхи çар министрне Дутра генерала лартасшăн; тепĕр ушкăнĕ, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Аранья ертсе пыраканни, Бразилире демократиллĕ режим тăвасшăн кĕрешет.

Уругвайăн Мексикăри посолĕ Кастро доктор митингра çапла каланă: Уругвайри демократиллĕ йышлă ушкăнсем фашистсем тапăннине сирсе ярĕç, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
сентябрĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа
КУНСЕРЕНЕХ
документальнăй çĕнĕ фильм
«СЕВАСТОПОЛЬШЕН ÇАПĂÇНИ»
кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать.
Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме тытăнать.

Завода çакăн пек работниксем кирлĕ: метала хĕртмесĕр ĕçлес ĕçе пĕлекен инженерсемпе техник-технологсем тата экономистсем, плановиксем, бухгалтерсем, конторăра ĕçлекен служащисем (бухгалтер ĕçне вĕренме учениксене те илеççĕ); токарьсем, слесарьсем, штамповщиксем, прессовщиксем, электромонтерсем, литейщиксем, сварщиксем тата ытти рабочисем те (çак ĕçсене вĕренме учениксене те илеççĕ); строительствăра ĕçлекен рабочисем—платниксем, столярсем, штукатурсем, кăмака тăвакансем, малярсем, грузчиксем, лавçăсем тата подсобнăй рабочисем (çаксене общежитине вырăнаçтараççĕ).
Çак адреспа пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80, Бюро пропусков. Кашни кун 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 3 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.
5—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 69×12 и. л. Тираж 10.000 экз.

НТ 00672